Чăваш  Республикинчи Патăрьель муниципалла округĕн
«Турханти «Çеçпĕл» ача сачĕ» муниципалитетăн шкул умĕнхи вĕренӳ
бюджет учрежденийĕ

**Вăтам ушкăнра çут çанталăк  материалĕпе**
**вылямалли вăйă конспекчĕ**

Богданова Ирина Владимиронва
воспитатель
хатĕрленĕ

Турхан ялĕ-2023

**Вăйă тĕллевĕсем:**

Шыв çинчен тата çут çанталăк материалĕсем çинчен ачасен пĕлĕвне çирĕплетесси; ачасен пуплевне çĕнĕ сăмахсемпе пуянлатса аталантарасси;

ачасене тăван тавралăхпа паллаштарасси, тавра курăмне аталантарасси; ачасен тимлĕхне аталантарасси; аслисен калаçăвне итлеме тата ăнланма хăнăхтарасси; тăван тавралăха, çут çанталăка упрама вĕрентесси.

**Усă курмалли хатĕрсем:**

Асамлă карçинкка, патак, чул татăкĕсем, савăтпа шыв, сарă тата симĕс çулçăсем.

**Вăйă юхăмĕ**

Пўлĕм. Йĕри-тавра сарă, кĕрен, хĕрлĕ çулçăсемпе, туратсемпе илемлетнĕ. Пĕр кĕтесре кўлĕ пур. (Ăна савăт çине шыв ярса тунă). Юнашар асамлă карçинкка ларать.

Илемлĕ кĕвĕ янăрать. Ачасене воспитатель «кўлĕ» патне çавăтса тухать.

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, йĕри-тавра пăхăр-ха, мĕнле илемлĕ! Ылтăн кĕркунне çитрĕ! Тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсемпе витĕннĕ тавралăх. Хĕвелĕ тата мĕнле хĕртсе пăхать!

Çитрĕ ĕнтĕ, çитрĕ
Ылтăн кĕркунне.
Çулçăсем сап-сарă
Ўкрĕç çĕр çине.

(Воспитатель сăвă каланă май, тĕрлĕ çулçăсене çўлелле ывăтать).

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, савăтра мĕн куратăр?

А ч а с е м: Шыв куратпăр.

В о с п и т а т е л ь: Тĕрĕс, ку-кўлĕ.

Ачасем, эсир тата мĕн куратăр?

А ч а с е м: Карçинкка.

В о с п и т а т е л ь: Карçинккара мĕн пур? (Ачасем пĕлмесен пулăшатпăр).

А ч а с е м: Патак, чул катăкĕсем пур.

В о с п и т а т е л ь: Вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

А ч а с е м: Патакĕ варăм, çăмăл, чулĕ вара йывăр.

В о с п и т а т е л ь: Маттурсем, тĕрĕс!

Атьăр-ха, вăйă вылятпăр. Тимлĕ пулăр. Эпĕ вăйă вылянине сăнăр. (Шыва чул татăкне пăрахатăп. Шăмпăрт! туса ўкет шыва чул. Ачасем тимлĕн сăнаççĕ).

В о с п и т а т е л ь: Чул татăкĕ мĕншĕн шывра путрĕ-ши?

А ч а с е м: Мĕншĕн тесессĕн чул йывăр.

В о с п и т а т е л ь: Чул татăкĕ мĕнле сасă пачĕ?

А ч а с е м: Шăмпăрт! Шăмпăрт!

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, çак вăййа кам выляса пăхасшăн?

А ч а с е м: Эпĕ! Эпĕ!

В о с п и т а т е л ь: Ванюк, чула шыва ывăтса пăх-ха.

(Ванюк ывăтать. Ывăтнă чух шăмпăрт! тет).

В о с п и т а т е л ь: Халĕ вара пурте выляса пăхăпăр.

(Воспитатель чул катăкĕсене ачасене валеçсе парать.)

В о с п и т а т е л ь: Чул катăкĕсене шыва ывăтатпăр. Чул катăкĕсем ăçта çухалчĕç?

А ч а с е м: Путрĕç! Шыва анса кайрĕç!

В о с п и т а т е л ь: Тĕрĕс, маттур ачасем, чул татăкĕсем шыва анса кайрĕç, мĕншĕн тесессĕн вĕсем йывăр.

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, тата пĕр вăйă выляса пăхар-и?

А ч а с е м: Выляр! Выляр!

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, асамлă карçинккара çут çанталăк материалĕ пур. Мĕн-ши вăл?

А ч а с е м: Патак.

В о с п и т а т е л ь: Тĕрĕс, Анюк. Карçинккара йывăç патак пур.

В о с п и т а т е л ь: Апла пулсан вăййа пуçлар-ха. (Чи малтан вăййа выляса кăтартатăп. Патака шыва ывăтатăп. Вĕретĕп, патака хускататăп. Ачасем тимлĕн сăнаççĕ).

Петюк, йывăç патакка шыва пăрах-ха. (Ача патакка шыва пăрахать). Халĕ пурте харăс шыв çине вĕретпĕр. (Ачасем вĕреççĕ, вĕрнĕ сывлăшпа патак хускалать).

В о с п и т а т е л ь: (Ачасем вĕрсе патака хускатнă чух сăвă вулатăп).

Çил вĕрет, çил вĕрет<br>
Туратсене вăл силлет.<br>
Пĕлĕтсене хăвалать<br>
Хумсене вăл вылятать.

В о с п и т а т е л ь: Паянхи вăйăра мĕн çĕнни пĕлтĕр?

А ч а с е м: Йывăç патак шывра путмасть, мĕншĕн тесен вăл çăмăл. Чул татăкĕ йывăр, çавăнпа вăл путать.

В о с п и т а т е л ь: Тĕрĕс, ачасем, маттурсем! Çăмăл япаласем шывра путмаççĕ, йывăррисем вара – путаççĕ.

В о с п и т а т е л ь: Эсир паян мана савăнтартăр, тăрăшса вылярăр.

В о с п и т а т е л ь: Паян вылянă вăйă килĕшрĕ пулсан асмлă карçинккаран сарă çулçăсене илетпĕр, килĕшмерĕ пулсан – симĕссисене.

(Ачасем çулçăсене илеççĕ).

Малалла та эпир сирĕнпе тĕрлĕ вăйă выльăпăр.